3693
45-35

Н. И. ШЕЛЕПИН



# Ача-пăча сăввисем

ЧĂВАШГОСИЗДАТ

Н. И. ШЕЛЕПИ

# АЧА-ПӐЧА САВВИСЕМ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1945

Редактор Л. Я. Агаков

НГ00023 Подписано к печати 9-II-45г. Заказ 2028
Тираж 5000 экз, Типография № 1 Упр. полиграф. пром.

при СНК ЧАССР г. Чебоксары.

# Н. И. ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ ÇИНЧЕН

Чăваш халăх поэчĕ, орденоносец Николай Иванович Полоруссов-Шелепи 1881 çулти майăн 15-мĕшĕнче, хальхи Тутар республикине кĕрекен Аксу районĕнчи Çĕнĕ Ӳсел ятла ялта çуралнă. Унăн ашшĕ вăтам хуçалăхлă хресчен пулнă.

Николай Иванович ӳснĕ чух, патша влаçлĕ саманара, чăваш ялĕсенче шкулсем сайра пулнă. Çавăнпа та халăх тĕттĕмлĕхре пăчăхнă. Аран вулама е çыркалама пĕлекенсем те ун чухне халăх хушшинче питĕ сахал тупăннă.

Вунпĕр çул çине кайсан, Николай Иванович (ун чухне ăна Микулай, тесе чĕннĕ) хăйсен ялĕнчен ултă çухрăмра ларакан Кивĕ Мăкшăелĕнчи земски училищăна кĕнĕ. Шкулта вăл лайăх вĕреннĕ. Тăватă çултан вĕренсе тухнă. Анчах та, çывăхра пысăк шкулсем пулманнипе, малалла вĕренме пултарайман. Микулай вара ашшĕ хуçалăхĕнчех çĕрĕçлесе пурăннă.

Çамрăк Микулайăн тăван çĕршыв синчен, тĕнчери пурнăç çинчен лайăхрах пĕлесси

килнӗ, наукăпа паллаштаракан кӗнекесене вуласси килнӗ. Пуринчен те ытларах вăл илемлӗ литературăна юратнă. Анчах та ун чухнехи ялсенче кӗнеке тупса вулама питех те йывăр пулнă. Çапах та Микулай хăй вӗреннӗ шкулти учительсем урлă хăшпӗр кӗнекесене тупкаласа вуланă, хăйӗн пӗлӗвне ӳстернӗ.

Микулай вунултă çула çитсен, унăн ашшӗ вилнӗ. Анчах тăван аслашшӗ сывă пуранна-ха. Вăл хăйӗн мăнукне чӗререн юратса ăшă кăмăлпа пăхса ӳстернӗ, ăна килти тата ялху-çалахӗнчи ӗç йӗркисене вӗрентнӗ. Микулай аслашшӗне, макçăм старике, ялта—„Ялак старик" тесе чӗннӗ. Ялак старик чăваш халăхӗн юмах-халлапӗсене нумай пӗлнӗ. Микулай, хăй пӗчӗк чух, аслашшӗ каласа паракан юмах-халлапсене ытарайми юратса итленӗ. Вӗсенчен чылайӗшне манмасăр, лайăх астуса пуранна. Кайран, ӳссе çитсен, Николай Иванович çав халлапсем тăрăх чăваш литературине илемлӗ произведенисем çырса пама пултарчӗ. Вӗсем: „Эссепе", „Уксах Тимӗр Пӳлере илни" тата ыт. те.

Николай Иванович ӗçхалăхне чуралăхра тытакан самодержавиллӗ патша влаçӗпе нимпле те килӗшме пултарайман. Уйрăмăнах ăна патша влаçӗ чăваш пек вак халăхсене этем тивлечӗсӗр усрани хытă тарăхтарнă. Çав

вăхăтра чăваш халăхĕ тĕттĕмлĕхре пăчăхни тата вăл чухăнлăхпа тĕрлĕрен чир-чĕр айĕнче тертленсе пурăнни пĕтĕмпех патша влаçĕнчен килнине те Николай Иванович çителĕклĕн ăнланса çитнĕ. Çавăнпа та 1905—1907-мĕш çулсенчи революцие вăл пысăк хаваслăхпа йышăнса илнĕ. Çак хавхаланупа çĕкленсе Николай Иванович революциллĕ шухăшпа тулнă сăвăсем çырма тытăнать. 1907-мĕш çулта вăл Хусанта тухма тытăннă „Хыпар" ятлă пĕртен-пĕр чăваш хаçатĕнче хăйĕн чи малтанхи „Раççей" тата „Çĕлен" текен сăввисене пичетлесе кăларнă.

„Çĕлен" ятлă сăввине вăл юмахсем майлă, юптарса çырнă. Мĕншĕн тесен, ун чух патша влаçĕ çинчен тӳррĕнех каласа çырнă сăвăсене легально* тухса тăракан хаçатсенче пичетлемен.

„Çĕлен" сăвва юптаруллă майпа çырнă пулин те, вулакансем автор унта мĕн çинчен каланине аванах ăнланма пултараççĕ. „Çĕр пысăкĕш çĕлен"—самодержавиллĕ патша влаçне, контрреволюциллĕ улпутсемпе капиталистсен влаçне пĕлтерет. Çĕленпе çапăçакан „Çут

* „Легально" тухакан хаçат тесе ун чухне влаçсенчен пытанмасăр тухса тăнă хаçатсене каланă. Çав вăхăтрах тата „нелегально" тухса тăнă хаçатсем те пулнă. Вĕсене патша влаçĕ çыннисенчен вăрттăн, пытанса ĕçлекен типографисенче пичетлесе кăларнă.

хĕвел çутти пек* çиçекен вут-кайăк—революцие пĕлтерет. Патша влаçĕ 1905—07 мĕш çулсенчи революцие хĕçпăшал вăйĕпе пусарса лартнă. Анчах та Шелепи сăввинчи вут-кайăк хура çĕлене çĕнтерсе çиеле тухать. Çакăнтан эпир Н. И. Полоруссов-Шелепи Российăра часах революци çĕнтерессе ĕненсе тăнине куратпăр,

„Раççей" сăввине те Н. И. Шелепи юптару меслечĕпе сăвăласа çырнă. Ку сăввинче вăл „пичĕке пек" мăн хырăмлă улпутсемпе „çĕлен пек пăхкалакан" полицейскисенчен тата уççăн та вичкĕнрехххĕн мăшкăласа кулать.

Çак сăвăсем пичетленсе тухнă хыççăн, вĕсен авторĕ революциллĕ ĕççене хутшăннине туйнă пек пулса, патша чиновникĕсем Н. И. Шелепи çине шанми куçпа пăхма пуçлаççĕ, ăна пур майпа та хĕсĕрлеме тата ун хыççăн йĕрлесе çÿреме тытăнаççĕ. Çакна пула Н. И. Шелепи 1910-мĕш çулта, контрреволюци халăх хушшинчи пĕтĕм чĕрĕ сывлăша пĕтерсе лартма тăрăшнă вăхăтра, Çĕпĕре тухса кайса 2—3 çул хушши влаçсен куçĕнчен пытанса пурăнать.

Октябрь революцичченхи саманара чăвашсен илемлĕ литератури пулман. Мĕншĕн тесен, патша влаçĕ чăваш пек вак халăхсене хăйсен тăван литературине тума ирĕк паман. Çырма тăрăшакансем, илемлĕ çырма пулта-

ракансем те пулнă. Ун пеккисем вĕсем: „Арçури“ авторĕ Михаил Федоров, чăвашсен классикла произведенине—„Нарспи“ поэмăна çыракан Константин Иванов, революциллĕ сăвăсен авторĕ—Тайр Тимкки, вĕсемпе пĕрлех Н. И. Шелепи тата ыттисем те пулнă. Анчах вĕсем çырнă произведенисем çав вăхăтра халăх хушшине йышлăн саланма пултарайман. Пĕр енчен—вĕсен унчух ку тĕлĕшпе пикенсе ĕçлемелли майсем пулман, тепĕр енчен тата çырнă пек япалисене пичетлесе кăларма та питех те йывăр пулнă. Çакна пула хăшпĕр çырма пултаракансем те, хăйсен литературалла творчествине малалла сарма çул çуккине кура, ĕçлеме пăрахнă. Апла пулин те, Н. И. Шелепи чăваш литературине тăвасшăн пĕтĕм чĕрипе хĕрӳлленсе çунна. Вăл çырма пăрахман. 1912—13-мĕш çулсенче вăл „Çарăмсанпа Хăнтăрçа“ ятлă поэмăллă япала тата „Константинополь хули çинчен чăваш ваттисем калани“ текен сăвăллă калав çырса пĕтерне. Ку произведенисене Н. И. Ашмарин профессор тăрăшнипе 1915-мĕш çулта Хусанта пичетлесе кăларнă. Чăн та, ку произведенисем Н. И. Шелепин кирлĕ пек якатса çитернĕ паха япаласемех мар ĕнтĕ. Кунта пире вăл произведенисен пахалăхĕ мар, пуринчен ытла Н. И. Шелепи çав вăхăтра та хăйĕн шанчăкне çухатманни, вăл, пĕччен пулин те, чăваш ли-

тературине тăвасшăн çунни, уншăн ĕçлени питĕ хакла тăрать.

Н. И. Шелепин литературăллă творчество таланчĕ Октябрь революцийĕ хыççăн тин ирĕклĕ аслă çул çине тухма пултарчĕ. Совет влаçлĕ саманара вăл талант вăйланса, сарăлса пычĕ, политикăллă идейăпа ўссе çирĕпленчĕ. Н. И. Шелепи Ленин—Сталин организацилесе ўстернĕ большевиксен партийĕ уçса пана асла Октябрь саманине, совет влаçне мухтаса юрлакан хĕрўллĕ поэт пулса тăчĕ. Çак çутă та ирĕклĕ пурнăçра вăл хăйĕн тахçантанпа хĕмленсе тăнă ĕмĕчĕсем çитсе тăнине курчĕ.

Н. И. Шелепи Октябрь революцийĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пĕтĕм пурнăçĕпе обществăллă ĕçсене хутшăнса, тин çеç чăмăртаннă совет органĕсенче тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Малтанах вăл хăйсен Аксу (Аксубаево) вулăс исполкомĕн членĕ, унтан Чистополь уездинчи трибунал сучĕн членĕ пулса ĕçлет. 1918-мĕш çулта Чистополь таврашне шургвардипе чехословаксен çарĕ йышăнса илнĕ, тата 1920 çул вĕçĕнче çав вырăнтах кулаксен восстанийĕ пулнă. Çав вăхăтсенче Н. И. Шелепи темиçе хутчен те пысăк хăрушлăхсем умĕнче тăнă. Контрреволюцилле влаç сыннисем ăна тытасшăн пулнă. Н. И. Шелепи пытанса пурăннипе çеç пĕтесрен çалăнса юлнă.

1922-мӗш çулта кӗркунне Н. И. Шелепин Шупашкара куçса килчӗ. Кунта чи малтанах, пӗр икӗ çул хушши, Чӑваш Облисполкомӗ çумӗнче облаçри совет хуçалӑхне шута илес тӗлӗшпе уполномоченнӑй пулса ӗçлерӗ. 1924—1928 мӗш çулсем хушшинче Шупашкарти коммуна шкулӗнче хуçалӑха пӑхса тӑракан пулса пурӑнчӗ.

Коммуна шкулӗнче пурӑннӑ çулсем Н. И. Шелепин литература тӗлӗшӗпе чи нумай тата чи ӑнӑçлӑн ӗçленӗ çулсем пулчӗç. Çак кӗнекери ача-пӑча саввисене те вӑл пӗтӗмӗшпе пекех çав коммуна шкулӗнче ӗçленӗ вӑхӑтра çырчӗ. Ку сӑвӑсене вӑл шкулра вӗренекен ачасене вуласа паратчӗ. Коммуна шкулӗнчи ачасене тӑван литературӑна юратма вӗрентетчӗ.

1923—24-мӗш çулсем—Шупашкарта Чӑваш совет писателӗсен союзне организацилес тӗлӗшпе тата чӑвашла илемлӗ литература журналӗ кӑларас пирки пикенсе хатӗрленнӗ çулсем пулчӗç. Николай Иванович çак ӗççене пӗтӗм чунӗ-чӗрипе хавасланса хутшӑнатчӗ. „Сунтал" журналӑн пӗрремӗш номерӗнчех унӑн „Ленина асӑнса" ятлӑ паллӑ сӑвви пичетленсе тухрӗ. Чӑвашла илемлӗ литература журнале тухнине курасси—Николай Ивановичӑн тахçантанхи ӗмӗчӗ пулнӑ. „Сунтал" тухма пуçлани—унӑн пуçӗнче нумай çулсем хушши

хӗмленсе ҫӳренӗ пысӑк ӗмӗчӗ пурнӑҫа кӗни пулчӗ. Вӑл унӑн пурнӑҫӗшӗн каласа парайми пысӑк савӑнӑҫлӑ праҫник ҫитнӗ пекех туйӑнчӗ.

Н. И. Шелепи Совет ҫӗршывӗнчи социализм строительствине хаваслӑхпа йышӑнса илчӗ. Чӑваш ҫӗрӗнче те пысӑк заводсем, фабрикӑсем ӳссе ҫитӗннипе вӑл вӗҫӗмсӗр хӗпӗртерӗ, колхозсем тунине ырларӗ. Ҫаксем пирки нумай хӗрӳлле сӑвӑсем ҫырчӗ.

Пӗр вуникӗ ҫул каялла Н. И. Шелепие пысӑк инкек ҫитсе ҫапрӗ. 1929-мӗш ҫултан пуҫласа унӑн куҫӗсем йӑвашланма пуҫларӗҫ. Операци туни те пулӑшмарӗ. 1932-мӗш ҫулта вара вӑл пӗтӗмпех суккӑрланса ҫитсе нимӗн те курми пулчӗ. Куҫсӑр тӑрса юлнӑ пулин те Н. И. Шелепи пуҫне усмарӗ, кулянса лармарӗ. Литература тӗлӗшӗпе вӑл пушшех те хӗрӳлленсе ӗҫлеме тытӑнчӗ. Нумай чухне вӑл хӑйне хуплана йывӑр инкеке пӗр сӑвӑсем ҫырнипе ҫех пусарса, паттӑрланса пурӑнчӗ. Куҫӗсем ҫут тӗнчене курми пулнӑ пулин те, Шелепи тӑван ҫӗршывра тата пӗтӗм тӗнчере мӗн-мӗн пулса пынисене лайӑх пӗлсе тӑратчӗ; ҫӗршывра тата тӗнчере мӗнле ӗҫсем пулнисемпе хытӑ интересленсе пурӑнатчӗ. Ҫӗршыври кашни па ілӑ ӗҫсем пиркиех сӑвӑсем ҫырса хӑй сассине пачӗ. Ҫаксене шута илсе, Н. И. Шелепи чӑваш литературишӗн ӗҫлени

30 çул тултарнă вăхăтра, 1936-мĕш çулхине, Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ăна хисеплĕ ят—Чăваш халăх поэчĕ—ятне пачĕ. Тата каярахпа Совет Союзĕн правительстви ăна „Знак почета" орденĕ парса наградăларĕ.

Хăй ĕçĕсене Совет правительстви хисепе хурса хакланипе хавасланнă Николай Иванович, ватă енне сулăннă пулин те, пикенсех ĕçлерĕ, обществăллă ĕçсенчен юлмарĕ. Фашистла Германи Совет çĕршывĕ çине тапăнса Отечественнăй вăрçă пуçлансан, фашистсен тискерлĕхĕ пирки тӳсейми пăлханнă Н. И. Шелепи чылай сăвăсем çырчĕ. Вăрçă пуçланнă кунсенчех вăл хăйĕн сăввисенчен пĕринче, пирĕн тăван çĕршыва хапсăнакан Гитлера ылханса:

„Тăршшĕ ик метр, урлăш пĕрре—
Территори кирлĕ Гитлĕре..." терĕ.

Паян эпир Н. И. Шелепи калана вирлĕ сăмах чăнах та пурнăçа кĕресси патне çитрĕмĕр. Совет халăхĕн хăватлă Хĕрлĕ Çарĕ хамăрăн аслă çĕршыва ирсĕр тăшманран тасатрĕ. Пире çăтса ярассипе каппайнă тискер тăшман халĕ ĕнтĕ юнне юхтарса каялла, хăйĕн шăтăкне чакса кĕчĕ. Вăл юлашки вăйне пухса çеç хирĕç çапăçать. Ăна пĕтерсе тăкасси çывăх. Пĕтĕм тăван çĕршыв, пĕтĕм совет ха-

лахĕ часах çĕнтерӳллĕ мир кунне курса савăнĕ. Пирĕн Николай Иванович та хаваслă çута куна кĕтсе пурăнатчĕ. Анчах та унăн пархатарлă кунçулĕ ăна кураймарĕ. Йывăр чирпе асапланнă хыççăн, вăл 1945 çулхи январĕн 12-мĕш кунĕнче вилсе кайрĕ.

Чăваш халăх поэчĕ Н. И. Полоруссов-Шелепи пирĕн хушăмăрта текех çук ĕнтĕ. Анчах та вăл çырса хăварнă произведенисем çухалмасăр чăваш литературинче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрĕç. Вĕсенчен чи паха сăвви-юрисем халăх хушшинче ĕмĕртен ĕмĕре те пырĕç.

**С. Эльгер.**

## ЧĂВАШ САВВИ

Авал, патша пур чухне,
Пирĕн чăваш ялсенче,
Вăрттăн çĕрте, пытанса,
Йăвашланса, вăтанса
Пĕр сар кайăк пурăннă —
Пит имшеркке курăннă.
Ăна чăваш ваттисем,
Çĕрне-кунне пĕлмесĕр,
Хĕлĕн-çăвĕн ĕçлесе,
Хырăç-марăç тӳлесе,
Хĕрӳ ĕçре, туйсенче,
Уявсенче, уйсенче
Ачашласа усранă.
Юнлă патша тарçисем,
Ăна сума-сумасăр,
Ним вырăнне хумасăр
Кулса тăнă хурласа,
Хуласене ямасăр,
Çӳреме çул памасăр.

Халĕ ĕнтĕ вăл кайăк
Хулара та пурăнать,
Тăсти çĕршывсенче те
Вутăн-хĕмĕн курăнать.
Сасси лайăх юрлама,
Юрри хитре итлеме;
Революци ырлăхпе
Хăй тытăнчĕ питлеме.
Юрла, юрла, сар кайăк,
Шăпчăк сас пек сассупа!
Санăн юнна ĕçекен
Тăшман сăнни хуçăлчĕ!
Сана ирĕк янрама
Аслă тĕнче уçăлчĕ!

## ЛЕНИН ШУХĂШĔ

Санăн пуçăнти вăйлă шухăшсем,
Мĕнпур ĕççыннин вăйне çĕклесе,
Тискер фашизм юнлă никĕсне
Тĕпĕ-йĕрĕпе кисрентереççĕ;
Пĕтĕм çĕр çинчи йĕркесĕрлĕхе,
Туппа пенĕ пек, ишсе пыраççĕ,
Мĕнпур ĕçхалăх ирĕклĕхĕшĕн
Хурçă шăратса никĕс хураççĕ.

Санăн хăватлă, чаплă шухăшу
Хĕвел пек çутă, çăлтăр пек çÿлте —
Пĕтĕм тĕнчипе вĕçсе çÿреме
Нимĕнле вăй та ăна чарас çук;
Пĕлĕт юхнă пек ирĕккĕн юхма
Тем пек хăват та çулне пÿлес çук,
Тем чухлĕ пысăк тинĕссем çинчен
Урлă та пирлĕ тăвăл пек çÿрет.
Тимĕр картасем, вăрмансем урлă,
Çил пек ыткăнса, çиçĕм пек кĕрет;
Этем ăрăвĕн çулне кăтартса,
Çĕре çутатса маяк пек çунать,
Пур ĕçхалăхне чĕнет пĕрлешме,
Миллионшар сынна çитсе вăратать;
Пусмăр тĕнчипе тăрса кĕрешме
Хурçă пек çирĕп вăя чăмăртать.

## ТЕЛЕЙЛĔ АЧАСЕМ

Чухăн та тăлăх
Ача-пăчасем,
Ĕмĕр çын хурри
Пулса ÿсетчĕç.
Мĕнпур хĕн-хура,
Асапа, хуйха,

Йĕрсе-макăрса
Вĕсем тӳсетчĕç.
Пур хăрăк-харăк,
Çĕтĕк-çатăка,
Вĕсен çийĕнче
Кураттăмăрччĕ.
Выртса çӳрекен
Татăк-кĕсĕкшĕн,
Килĕрен киле
Çӳретчĕç вĕсем.
Патша йĕркипе,
Ача-пăчана
Чир—тĕн сĕрĕмĕпе
Тĕтĕрнĕ унчух.
Халь ĕнтĕ эпир
Ирĕк çĕршывра
Ирĕк ӳсетпĕр
Вăйă-кулăра.
Утать пионер
Ленин çулĕпе,—
Вут çулăмĕ пек
Вĕри чĕреллĕ.
Çыру вулатпăр,
Сăвă калатпăр;

Шевле сикнĕ пек
Вăйă вылятпăр.
Ялсенче эпир
Колхоз тыррине
Вăрă-хурахран
Хĕрÿ сыхлатпăр.
Тăвас ĕçсене
Лайăх тăватпăр,
Юрăсене те
Шăрантаратпăр.

## ТУМА ПУЛНĂ — ТĂВĂПĂР!

Шурăмпуçĕ çуталчĕ,
Тăрăр часрах, ачасем,
Кăпăр-капăр тумланăр,
Çăвăр питĕр-куçăра!
Тăрăр, тăрăр хăвăртрах,
Уçăр часрах ыйхăра,
Турткаланса выртас мар
Вырăн çинче ăшăра.
Пурте харăс çĕкленсе
Хăвăрт сиксе тăрăр та,
Çитсе ÿкĕр çиçĕм пек
Çут ĕмĕте пурсăр та.

Харăс-харăс çĕкленсе,
Кĕрĕс-кĕрĕс сикĕпĕр!
Çитес тенĕ вырăна
Çитме пулнă—çитĕпĕр!
Хăшĕ — çӳлтен вĕçĕпĕр,
Хăшĕ — шывпа ишĕпĕр,
Пĕлĕт ӳснĕ еверлĕ
Сехечĕпе ӳсĕпĕр!
Тума пулнă — тăвăпăр,
Илме пулнă — илĕпĕр,
Пур çĕр çинчи халăха
Пĕрлештерме пĕлĕпĕр!

## ХУРÇĂ ÇУНАТСЕМ

Шупашкарăн çийĕнче,
Аслати пек кĕрлесе,
Хурçă кайăк—гидроплан
Вĕçсе çӳрет явăнса.
Атăл хĕрне, шыв çине,
Вĕçсе анса ларать те,
Çавра çил пек кĕрлесе,
Шыва çурса çех пырать.
Чĕнсе илет сынсене, —
Унтан, ăшне лартать те.

Илсе каять пӗлӗте,
Вӗҫсе ҫӳрет ҫиҫӗмле.
Пысӑк уяв ҫитнӗ пек,—
Халӑх Атӑл хӗрринче...
Мӗнле ӗмӗт сукка-ши
Кашни сынӑн чӗринче?
Пӗри вӗҫсе курӗччӗ,
Тепри вӗҫевҫӗ пулӗччӗ—
Ҫӗршыва вӑй кӳрӗччӗ,
Тӑшман ҫулне пӳлӗччӗ.
Атьӑр часрах, юлташсем,
Сывлӑш флочӗ тумашкӑн!
Мӗнпур ватти-вӗттипе
Тӑрӑшӑр вӑй ҫитнипе!

## КӐНТӐР ЕНЧИ ҪИЛ

Хӗвел шевли яланах
Йӑлтӑртатса тӑракан,
Ҫӗршыв ҫийӗ ӗмӗрех
Вутӑн-хӗмӗн курнакан,
Тем пысӑккӗш тинӗссем
Пӗр шӑнмасӑр выртакан—
Хамӑн чаплӑ ҫӗршывран,
Ырӑ хыпар калама

Ку çĕршыва килтĕм эп.
Акă часах çуркунне
Кунта килсе çитĕ те,
Унăн вутлă урапи
Вут хыптарĕ пĕлĕте.
Манăн тăван çĕршывра
Çӳлĕ тусен тăррисем
Шурă юрпа витĕнсе,
Пĕлĕт ăшне кĕреççĕ.
Кăвак тинĕс çийĕнче
Ахах тĕслĕ хумĕсем,
Хĕлне-çуне пĕлмесĕр,
Сив пăр айне пуласса
Асне-пилне илмесĕр,
Кĕленче пек çутăлса,
Йăлтăр-ялтăр выляса,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕр-пĕрне
Хăваласа çӳреççĕ.
Тем-тем тĕслĕ чечексем
Ялан вутла çунаççĕ,
Тем пысăккĕш пуллисем
Шăмпăр-шампăр чăмаççĕ.
Кайăк сасси яланах
Пын чĕлĕхлĕн илтĕнет —

Çавă чаплă çĕршывран
Ку çĕршыва килтĕм эп.
Эпĕ — кăнтăр енчи çил,
Ыр çанталăк сывлăшĕ;
Эп килсессĕн тин килет
Кунта çĕршыв ырлăхĕ.
Çуркуннепе çĕр çинче
Ялан пĕрле çӳретĕп,
Аçта çитнĕ — вăл тĕлте
Сивве çапса çĕмретĕп.
Вăрманне те, уйне те
Вăрататăп ыйхинчен,
Чĕрчунсене пурне те
Хăтаратăп хуйхинчен.
Шыв-шурсене пĕтĕмпех
Пăр айĕнчен кăларап,
Колхозсене илемлĕ
Ăшă çанталăк парап.

## ÇУРКУННЕ

Акă епле çуркунне!
Хĕвел хытă пĕçертет,
Вут хунă пек шăратса
Сивве, юра пĕтерет.

Кулса тăнă евĕрлĕ
Хĕвел пăхать çутăлса;
Тарать куççуль юхтарса
Сивĕ йĕрсе, çухăрса.
Кĕпĕрленсе, кĕрлесе,
Сĕлтĕшленсе, сĕрĕшсе
Çырмасенче пăр каять
Йăлтăр-ялтăр курăнса,—
Шăкăлтатса калаçса,
Шăнкăртатса, шавласа,
Пĕрне-пĕри хăваласа
Пыра-пыра капланать.
Эх, çуркунне, çуркунне,
Савăнтарать пурне те!
Вут хунă пек çунтарать
Вăл юрне те, пăрне те.
Сăртсем, тусем, çеремсем,
Уйсем—колхоз хирĕсем,
Симĕс пустав витĕнсе,
Хатĕрлеççĕ çимĕçсем.
Пур çĕрте те чăр-чăр-чăр,
Кайăк сасси илтĕнет;
Хура вăрман, çеçенхир
Пурçăн тумтир тăхăнать.

## ВĔҪСЕ КИЛЧĔ ҪУРКУННЕ

Аслă, чаплă мухтавпа
Вĕҫсе килчĕ ҫуркунне:
Килчĕ ҫĕршыв юрласси,
Мĕнпур чĕрчун савнасси.
Вăл колхоз хирĕсене
Пĕтĕм чунтан юрататъ,
Лăпка-лăпка вĕсене
Хĕл ыйхинчен вăрататъ.
Пирĕн савнă ҫĕршыва
Чĕрĕлĕх шыв ĕҫтерет,
Тĕрлĕ сырла ҫимĕҫпе
Йăвăҫ-курăк ӳстерет.
Усал, тискер кун ҫулĕ —
Хĕлпе сивĕ ҫанталăк —
Унтан анчах хăраҫҫĕ,
Тĕттĕм ҫĕре тараҫҫĕ.

## ҪӲҪЕ

Пур йăвăҫран маларах
Эп чечеке ларатăп,
Ҫут пурҫăн пек шап-шурă
Шурă кăчăк кăларап.

Хӗл сиввинчен хӑраса,
Тӗттӗм ҫӗрте пурӑнса
Халран кайнӑ пыл хуртне
Малтан эпӗ чӗртетӗп.
„Ҫӗрте ӑшӑ ҫуркунне!
Тутлӑ сӗткен ӗмӗртеп,—
Тух хӑвӑртрах, ылттӑн хурт,
Тӗттӗм шӑтӑкран!" тетӗп.

## ШӐНКӐРЧӐ

Кунти тӑван ҫӗршыва
Килтӗм вӗҫсе васкаса,
Ҫуркуннене юратса
Юрла-юрла, хашкаса.
Ҫурт тӑррине лартӑм та
Шӑрантартӑм сӑввӑма,
Савӑнтартӑм, култартӑм
Ачасене юррӑмпа.
Йӑпӑрт-йапӑрт йӑвана
Кӗре-кӗре пӑхатӑп,
Ӑшӑ вырӑн тумашкӑн
Тӗксем, ҫӳҫсем пухатӑп.
Унта чӗпӗ кӑларсан,
Йӑва тӑррине ларса,

Юрлап вара савӑнса,
Ҫунат ҫапса, шӑхӑрса.

## УШКӐН ШӐНКӐРЧӐ

Эпир ӑшӑ хыҫӗнчен
Ялан вӗҫсе ҫӳретпӗр,
Вӑл хӑш тӗле ҫитсен те—
Унпа пӗрле ҫитетпӗр.
Ӑшӑ енчи, ылттӑн пек,
Ыгарма ҫук ҫӗршывран,
Чаплӑ хӗвел ырлӑхпе
Харӑс хӑпса килтӗмӗр.
Халӗ кунта савӑнса,
Ҫунат ҫапса юрлатпӑр,
Сӑвӑ-юрӑ шӑратса
Ҫуркуннене саватпӑр.
Пире кётсе ачасем
Хӗпӗртесе, савӑнса,
Вӑрӑм шерте тӑррине
Хатӗрленӗ йӑвасем.
Мӗншӗн пирӗн юрлас мар,
Ҫавтери хисеп тунӑшӑн,
Ҫамрӑк-кӗрӗм, ывӑл-хӗр
Пире ырлӑх суннӑшӑн.

Колхоз тырри-пуллине
Сиен кӳрекенсене
Пинӗ-пинӗпе эпир
Пӗтеретпӗр хуртсене.

Усал хурт-кăпшанкă çеç—
Пире апат-çимĕçсем;
Колхоз хуçалăхĕнче
Эпир паха сăвăçсем.

Пире колхоз ачисем
Çавăнпа пит саваççĕ,
Тем пек хитре йăвасем
Хатĕрлесе параççĕ.

ПЫЛ ХУРЧĔСЕН ЮРРИ

Ылттăн çунатпа
Йăл-йăл курăнса
Вĕл-вĕл вĕçетпĕр
Колхоз садĕнче.

Ылттăн çуркунне,
Чаплă çуркунне!
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!

Хитре чечексен
Пылсене ĕçсе,
Пинĕ-пинĕпе
Çӳретпĕр вĕçсе.
Ылттăн çуркунне,
Чипер çуркунне!..
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!

## ХЕВЕЛ ШЕВЛИ

Эпĕ тĕнчере нимĕнрен те
Хăрамастăп, нихăçан та!
Хуйхă-суйхă кунĕсене
Çунтаратăп çулăмпа;
Усал сивĕ хăватне
Часах çапса çĕмретĕп.
Юрă-сăвă сассипе
Пĕтĕм çĕре тултарап,
Хĕлпе сивĕ хăватне
Вут хунă пек çунтарап.
Çĕр чăмăрĕ çийĕнче
Пур енне те çутатап,
Юра-пăра хăвăртрах
Ку çĕршывран çухатап.

Колхозниксен уй-хирне
Тĕрлĕ çимĕç тултарап,
Колхоз ыйăль-хĕрсене
Савăнтарап, култарап.

## ТĂРРИ ЮРРИ

Колхозниксем акара.
Эпĕ вĕсен тĕлĕнче
Ташла-ташла юрлатăп—
Чăрăлтатать çут тĕнче!
Çу шăраннă евĕрлĕ
Шăрантарап сăввăма,
Савăнтарап сассăмпа.

## КУРĂК

Пĕтĕм çĕршыв илемне
Эпĕ кўрсе пурăнап,
Симĕс пурçăн евĕрлĕ
Вутăн-хĕмĕн курăнап.

Симĕс пустав çитĕпе
Витсе тăрап эп çĕре,
Кунĕн çĕрĕн чăр та чар!—
Кайăк сасси ман çире.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк,
Тăрлик-тăрлик тăрнисем—
Янăраса тăраççĕ
Тĕрлĕ кайăк юррисем.
Хам çуратнă ача пек
Кайăксене сыхлатăп,
Ырă усă сывлăшпа
Эп вĕсене сывлатап.
Эп пулмасан çĕр çинче
Чечексем те пулмĕччĕç,
Колхозниксен нÿхрепсем
Сĕт-çупала тулмĕччĕç.
Колхоз выльăх-чĕрлĕхне
Тăрăс-тăрăс сиктереп,
Колхозниксен кил-йышне
Тутлă апат çитереп.

## ЧĔКЕÇ

Вĕçĕ-хĕррисĕр
Тинĕссем урлă,
Çиçĕм çиçнĕ пек
Вĕçсе килтĕм эп.
Эпĕ вĕçнине
Сывлăш та сисмест,

Хамӑн ҫийӗмри
Тӗкӗм те сикмест.
Ӑнсӑртран пӳрте
Вӗҫсе кӗрсессӗн,
Манӑн пуҫӑма
Сар-ҫу сӗреҫҫӗ:
„Ҫӑвару—ҫу сан,
Туту—пыл“, теҫҫӗ.
Манӑн сӑввӑма,
Сӑн сӑпатӑма
Колхоз ачисем
Тем пек саваҫҫӗ.

## ПАНУЛМИ ЧЕЧЕКӖ

Юлташӑмсем, тусӑмсем,
Ҫуркуннехи илемсем,
Ҫӗр ҫийӗнче ӳсекен
Йывӑҫ-курӑк, чечексем,
Ман ҫийӗме пӑхӑр-ха!
Пурҫӑн чаршав витнӗ пек
Витрӗм улма йывӑҫне,
Чечек айне хӑвартӑм
Чаплӑ шӑпчӑк сӑвӑҫне.
Пӗтӗм колхоз сачсене

Ырă шăршă тултартăм.
Мĕнпур ачи пăчине
Тутлă улма çитерĕп.

## ШĂПЧĂК

Мухтанмастăп, вĕçместĕп
Хитре тесе сăнăмпа;
Иртен-çӳрен сынсене
Тĕлĕнтерсп сăввăмпа.

Эп юрлама тытăнсан
Сар кайăк та вăганать,
Йывăç çулçи хушшине
Тĕттĕм çĕре пытанать.

Колхоз ывăль-хĕрĕсен
Эп чăн чаплă сăвăçи;
Тинĕс хум пек хумханать
Ман сасăпа йывăççи.

## САР КАЙĂК

Тĕкĕм-çӳçĕм сап-сарă,
Сар чечек пек курăнать;
Юрăмпала, сăввăмпа
Çутçанталăк шăранать.

Манӑн саспа сӗм вӑрман
Пӗр киленсе янӑрать,
Чаплӑ юрӑ-сӑвӑра
Уяври хал туйӑнать.

Юрласшӑнах ӑмӑртса
Ку ҫӗршыва килетӗп,
Колхозсемпе савӑнса
Пушшех чаплӑ юрлатӑп.

## ХӖВЕЛҪАВӐРӐНӐШ

Эп ҫуркунне ырлӑхпе
Часах ӳссе ҫитӗнеп,
Темӗн чухлӗ сип-симӗс
Ҫунатсемпе витӗнеп.
Ҫар пурҫӑн пек курӑнса,
Ларап ҫилпе силленсе,
Ялан хӗвел еннелле
Савса пӑхса, киленсе.
Мухтав сана, ҫуркунне,
Тав тӑватӑп савӑнса,
Пӗтӗм чунтан-чӗререн
Пуҫа тайса, аҫӑнса.

## ПЫЛ ХУРЧĔ

Пин-пинĕпе пĕрлешсе
Килĕштерсе пурнатпăр,
Ĕмĕр пĕрле ĕçлесе
Пĕрле ĕçсе-çиетпĕр.

Килĕштерсе пурăнма
Питĕ лайăх пĕлетпĕр,
Мĕнпур хитре чечекрен
Пылĕсене илетпĕр.

Усал хĕлпе сивĕрен
Эпир питĕ хăратпăр,
Тĕттĕм çĕре пытанса
Сехĕрленсе тăратпăр.

Çуркунне çеç хĕрхенсе
Пире çутта кăларать,
Хăрушă, усал вилĕмрен
Пĕр вăл анчах хăтарать.

Вăл килсессĕн, савăнса,
Чечек çине саланса,
Çăвĕпеле пыл йăтса
Пурăнатпăр юрласа.

Пирӗн пылтан тутлийӗ
Мӗнех пур-ши тенчере?
Ӑна ҫиме тытӑнсан
Ҫӑтса ярӑн чӗлхӳне.

Халӗ колхоз ҫемйине
Пылпа хӑна тӑватпӑр,
Хамӑр пекех пӗрлешсе
Ӗҫленӗшӗн саватпӑр.

## УПА

Эпӗ упа—утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайӑкран хытӑрах
Мӗкӗрттерсе улакан.

Ҫӑва тухсан—вӑрманта
Вӗллесене ватакан,
Тутлӑ пылне ҫиекен,
Ӗнесене тытакан.

Усал сиврен хӑраса
Хӗлӗпеле шӑтӑкра,
Ура тупань ҫуласа
Вилнӗ пекех сывратӑп.

Çуркунне тин вăранап,
Тинех çисе тăранап.
Вара сиксе ташлатăп,
Йăкăш-йăкăш шăватăп.

## КАШКĂР

Эпĕ кашкăр—кашаман,
Выçă чух пит асакан,
Хĕлле сурăх çимешкĕн
Хӳме урлă каçакан.

Уншăн мана тытсассăн
Урнă пекех хĕнеççĕ,
Тире сӳсе илеççĕ,
Сутса укçа тăваççĕ.

## ТИЛĔ ТУС

Эп—тилĕ тус—пит чее,
Куна пурте пĕлеççĕ.
Хĕлле мана йĕрпеле
Питĕ хытă йĕрлеççĕ:

Пăшалпа та переççĕ,
Капкăнсем те лартаççĕ.

Йытăсемпе шыраççĕ,
Чĕрене хыт сураççĕ.

Çырма-çатра хушшинче
Пĕрмай тарса çÿретĕп,
Çĕрле вăрттăн-карттăн çеç
Яла пырса кĕретĕп.

Автан тусăн сассине
Пĕтĕм чунтан юратап,
Анна эпĕ хăш чухне
Айхинчен те вăратап.

Тÿрĕ килсен чăхха та
Каплаттарса каятăп.
Ырă хаклă тирĕмпе
Çынсене эп ăшăтап.

ХĔЛЛЕХИ КАÇ

Уйăх та çутă,
Çăлтăр та нумай,
Йăлтăр та ялтăр
Йăлтăртатаççĕ.
Ак эп килелле
Чупса килетĕп,

Шăкăрт та шакăрт
Пӳрте кĕретĕп.
Юри шывпала
Сапса шăнтнă пек,
Аллăм-урамсем
Шанк хытса кайнă.
Ёф! те, ёф!—туса
Алла вĕретĕп;
Шăннипе йĕреп,
Сиксе чĕтретĕп.
Анне ман 'çирен
Ăшă кĕрĕке
Хывса илчĕ те—
Лăс-лăс! силлерĕ,
„И, ăссăр, ăссăр,
Пĕчĕкçĕ чĕппĕм!
Ама халиччен
Çӳрерĕн?" терĕ.
Кăмака çине
Асатте патне
Йăпăр та япăр
Хăпарса карăм.
Сак çинче атте
Çăпата тăвать,

Пуçне пĕкĕртсе
Шĕшлипе тирсе;
Анне, аллипе
Çӳлелле тăсса,
Яшка пачĕ те—
„Часрах çи“!—терĕ.
Хăвăртрах ĕçсе
Çисе тăрантăм,—
„Ярсам, асатте,
Халлапна“, терĕм.
Мана асатте
Часах итлерĕ—
„Пĕр халлап ярап,
Эс итле“,—терĕ.

## ХĔВЕЛЕ ÇИТЕХ

Юрă сассисем,
Купăс сассисем,
Пĕтĕм çĕр çинче
Кĕрлесе тăрăр!

Кĕрлеччĕр вĕсем,
Сут çанталăкра
Тинĕс хумĕ пек
Ишсе çӳреччĕр!

Хӗвел патне те
Ҫитсе ҫапӑнччӑр!
Ҫынсене пӗрмай
Малалла чӗнччӗр!

Пусмӑрлӑх, асап—
Тӗнчипех пӗтчӗр,
Колхоз ҫӗршыва
Телейпе виттӗр!

## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Н. И. Полоруссов-Шелепи çинчен | 3 |
| Чăваш сăвви | 13 |
| Ленин шухăшĕ | 14 |
| Телейлĕ ачасем | 15 |
| Тума пулнă тăвăпăр | 17 |
| Хурçă çунатсем | 18 |
| Кăнтăр енчи çил | 19 |
| Çуркунне | 21 |
| Вĕçсе килчĕ çуркунне | 23 |
| Çÿçе | — |
| Шăнкăрчă | 24 |
| Ушкăн шăнкăрчă | 25 |
| Пыл хурчĕсен юрри | 26 |
| Хĕвел шевли | 2 |
| Тăри юрри | 28 |
| Курăк | — |
| Чĕкеç | 29 |
| Панулми чечекĕ | 30 |
| Шăпчăк | 31 |
| Сарă кайăк | — |
| Хĕвелçаврăнăш | 32 |
| Пыл хурчĕ | 33 |
| У п а | 34 |
| Кашкăр | 35 |
| Тилĕ тус | — |
| Хĕллехи каç | 36 |
| Хĕвеле çитех | 38 |

Цена 2 р. 75 к.

*Н. И ШЕЛЕБИ*

**СТИХИ для ДЕТЕЙ**

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары—1945